Çěр ěçченě, сана çур аки шутлаттармасть-и?

Районти пěрлешӳллě хуçалăхсенче çуртри вăрлăхěсен пахалăхě мěнле пулнине кăтартни
(январěн 1-мěшě тěлне)

Колонкăсенче: 1. Вăрлăх кирлě план. 2. Тěрěслеттернě (центнерпа). 3. Кондициллě вăрлăх (процентпа). 4. Кондиция ларман вăрлăх пěтěмпе. 5. Вăл шутран тасалăхпа. 6. Çум курăк вăррисемли. 7. Шăтаслăхпа (центнерпа).

Е. Андреев яч. хис.	1650	1000	100	–	–	–	–
«Волга»	580	580	100	0	0	0	0
«Восток»	1150	1335	90	140	140	0	0
«Герой»	2450	2450	80	490	490	490	180
Ильич яч. хис.	2900	3735	100	0	0	0	0
ВТМ	300	0	0	0	0	0	0
Ленин яч. хис.	800	800	–	800	800	800	0
«Оринино»	2490	2490	52	1184	1184	992	0
«Передовик»	1700	1700	86	237	237	0	0
«Свобода»	3500	3120	85	470	470	470	0
Суворов яч. хис.	2000	2240	100	0	0	0	0
«Ударник»	3900	4000	85	586	586	0	0
«Хлебороб»	–	410	27	300	300	110	0
Чапаев яч. хич.	1500	1500	40	900	900	900	0
Чкалов яч. хис.	740	800	–	800	800	800	0
Мичурин яч. хис.	0	0	0	0	0	0	0
ООО «Гея»	250	250	100	0	0	0	0
ООО «Агро-Союз»	660	660	81	124	124	0	0
КФХ Бархаткин	500	0	0	0	0	0	0
РАЙОНĚПЕ	**27070**	**27070**	**78**	**6031**	**6031**	**4562**	**180**

Маларах илсе кăтартни çумне уйрăм культурăсен пахалăхě пирки чарăнса тăни те ытлашши пулмě. Кунти цифрăсен колонкисенче: 1. Тěрěслеттернě. 2. Кондициллě вăрлăх. 3. Кондиция ларман вăрлăх пěтěмпе. 4. Вăл шутран тасалăхпа. 5. Çум курăк вăррисемли. 6. Шăтаслăхпа (центнерпа).

Çурхи тулă	7805	5217	2588	2588	2002	0
Ӳрпа	14162	12515	1647	1647	1220	0
Сĕлě	4886	3214	1672	1672	1340	180
Пăрça	154	30	124	124	0	0
Акмалли вика	63	63	0	0	0	0
Тěрěслеттернě	**27070**	**21039**	**6031**	**6031**	**4562**	**180**

Çулла – çуна, хěлле урапа хатěрлеме хушнă ваттисем. Çак сăмахсенче ěçсен вăрвăрлăхě, вěсене вăхăтра пурнăçлани тата маларахах пысăк тухăç никěсне хывса хăварни. Çěнě çула кěтěмěр. Çулталăкăн пěрремěш уйăхě пырать. Кунсем вăрăмланма пуçларěç. Сисмěпěр те – çур аки ума тухě. Çав ответлă тапхăра эпир, уйрăмах вăрлăх янтăлассипе, паян епле хатěрленетпěр-ха? Хуравě çӳлерех илсе кăтартнă таблицăсенчен аван курăнать. Вăрлăхăн пысăк пайě тасалăхпа ака кондицине ларманни хуçалăхсем пěлтěрхи çур аки хыççăн гербицидсемпе япăх ěçленине тата вырма вăхăтěнче йěтемсем çинчи ěçе япăх йěркеленине кăтартать. Паянлăха вара хуçалăхсен кěлечěсене хывса хăварнă вăрлăх çěр ěçченěн чунне тивěçтереймест. Иртнě кěркуннеренпе вăрлăх илессипе-çěнетессипе вара районта никам та вырăнтан тапранман. Ку сисчěвлентерет.

Паян пěрлешӳллě хуçалăхсен тěп тěллевě – тырăна аласа ака кондицине çитересси, пысăк репродукциллě вăрлăха туянма мелсем тупасси. Ку ěçе кая хăварас марччě. Çакна валли çанталăк условийěсем те паян меллě темелле.

Çур аки пирки каласма пуçласан, выльăх апачě пирки шутласси те мала тухмалла. Çакна валли çěр ěçченě çулленех пысăк лаптăксем çинче нумай çул ӳсекен курăксем туса илет. Анчах ку ěçре те çулталăк пуçламăшě тěлне вăрлăх пахалăхěпе ыйтусене татса панă теессěм килмест. Январěн 1-мěшě тěлне çур акире акма пăхнă клевер, люцерна, козлятник культурисен вăрлăхне хуçалăхсем 354,5 центнер тěрěслеттерчěç. Çак хисепěн 44 проценчě кăна ака кондицине ларни çур акиччен кунта та татса памалли ыйтусем нумайийине кăтартса парать. Кондиция ларман вăрлăх ытларах тасалăхпа, çум курăк вăррисемпе уйрăлса тăрать. Çав вăхăтрах манас марччě, нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăх пахалăхě выльăх апачě ытлăçитлě янтăласа хуçалăх экономикине тивěçлě шайра тытма пулăшать.

В. МОРОЗОВ,
«Россельхозцентр» филиалăн
Муркашри пай пуçлăхě.

Аслă Çěнтерӳ 65 çул тултарнă май

«Союзпичет» райорганизаторě

Паянхи ăнăçусен ырă никěсě, малашлăх утăмěсен тулăх вăрлăхě хамăра çуратса ӳстернě тата экономика тěрекне йěркеленě аслă ăру çыннисенче. Çакна эпě иртнě кунсенче Шурчара пурăнакан Михаил Игнатьевич Тихонов патěнче пулсан тепěр хут ăнланса илтěм.

Мана 80 çултан иртнě кинемейпе мучи кěтсе илчěç. Çулěсем пур пулсан та, Тихоновсем тирпейлě пурăнаççě, урлă выртакан хатěре майлă çавăрсах тăраççě. Çěр ěçěпе ěмěрěпех çывăх пулнăскерсем, паян та ěне усраççě, чăх-чěп тытаççě, пахча çимěç туса илеççě.

– Нумай ěçе хамăр пурнăçлаймастпăр ěнтě, ывăлпа хěрсем, вěсен мăшăрěсемпе мăнуксем килсе пулăшса тăраççě. Килте иксěмěр çеç пулсан та хамăра пěччен туймастпăр, – алăк умнелле тухса кěтсе илчě кушăрханă аллисене ман еннелле тăсса Михаил Игнатьевич, мăшăрне чей вěретме сěнсе.

– Юрать, пěçернě кукăлě те кăмака умěнчех, – килěшсе кěрсе кайрě тěпелелле 1928 çулта çуралнă, 3 ача пăхса ӳстернě Нина Николаевна.

Тихоновсем патěнче эпě ăнсăртран мар. Районта хаçат çырăнтарас тапхăр пынă чух 36 çул пичет отрасльне халалланă ветеранпа тěл пулса калаçмаллах тесе шутларăм.

... Вăл çулсенчи çěршер-пиншер çамрăк пекех, хăйěн професси çулне Михаил çамрăк каччă хăй туптаса якатса пынă, кашни ěçшěн ответлăха туйнипе палăрса тăнă.

– Аттепе анне ача чухне тимлě пулма ыйтни, пуçăннă ěçшěн ответлăха туйма вěрентни тата çаксене ăша хывса пыни пурнан пурнăçра манăн характера çирěплетрěç. Çавăншăнах-тăр аслисем мана яланах яваплă ěçсене сěнетчěç. Пěр ěçе те вěçне çитерменни пулман, – сěтел хушшине сăн ӳкерчěксен альбомěсемпе тěрлě хутсем илсе пынă май калаçрě Михаил Игнатьевич.

Нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснěскер, ачаллах ěçе хăнăхнă, пурнăçри çухатусене те çамрăклах тӳссе ирттернě: Тăван çěршывăн Аслă вăрçин фронтěнче икě пиччěшне хыпарсăр çухатнă. Хуйхă-суйхăна пăхмасăрах 1943 çулта каччă питě лайăх паллăсемпе Муркашри вăтам шкултан вěренсе тухать. Йывăр вăхăтри шăпа ěнтě, шкул пěтернě çамрăка тӳрех салтака илеççě. Тăватă çул Инçет Хěвелтухăçěнче службăра тăрать вăл.

Вăхăт çитсен, мирлě пурнăçа таврăнсан, 4 çул колхозра вăй хунă хыççăн, тăрăшуллă арçынна Çыхăну министерствин Муркашри кантурне «Союзпичет» райорганизаторě пулса ěçлеме илеççě.

– Пропаганда вăйлă пулнăран хаçат çырăнтарасси çине район хуçисем питě вăйлă пăхатчěç. Фронтри пекчě ку ěç. Район хаçачě 9 пин экземпляра яхăн тиражпа тухатчě. Хаçат çырăнтарассипе Етěрнесемпе Хěрлě Чутайсем пирěнтен самай хыçалтаччě. Пěррехинче Тойкилтě учительне район хаçатне çырăнманшăн райком секретарě чěнсе илсе вăрçни паян та куç умěнче. Тепрехинче тата тепěр ялта район хаçатне сахалрах çырăннăччě. Райком секретарě мана чěнсе илчě те: «Е хаçат çырăнтаратăн, е ěçрен каятăн», – терě. Ответлăха туйма хăнăхнăскерěн ěçлес килет çав. Çěрле тухса утрăм вара çав яла, анчах тиража ӳкме памарăм, – аса илӳ çăмхине салтса ячě ěнерхи салтак.

Куллен Шурчаран Муркаша утни тата «Союзпичет» кантурěнчех сěтел çинче хут сарса çывăрни, анчах шаннă ěçе уксахлама паманни сахал пулнă-и тата? Михаил Игнатьевич Тихонов Çыхăну министерствин Муркашри кантурěнче «Союзпичет» райорганизаторě пулса пěр улшăнмасăр тивěçлě канăва тухичченех, 1987 çулхи январěн 27-мěшěччен, ěçлет. «Çапла вара 36 çул пěр сисěнмесěрех иртсе кайрě. Кулленех хаçат валеçнě, çырăнтарнă, халăхпа пěрле пулнă», – терě ума чей чашăкě лартнă май ěç ветеранě.

1949 çулта пěрлешнěскерсем, Нина Николаевнапа Михаил Игнатьевич Тихоновсем 2 хěрпе ывăл çуратса пурнăç çулě çине кăларнă. Кашнинех ěçрен ютшăнмасăр пурăнма вěрентнě. Çавăнпа та, «Ěç ветеранě» медале тивěçнěскерсем, иртнě кунсемшěн пěртте кулянмасăр пурăнма пултараççě. Вěсем пурнăçланă ěç урăх алăсенче паян та малалла пырать.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчěкě.

Экономика

Арендăна илер е туянар?..

Арендăна илнě пӳлěмсене Раççей Тěп банкěн рефинансировани ставкин пěрре виççěмěш пайěпе танлашакан процентсемпе 5 çулта тӳлесе илмелле туни нихăш банкра та çук. Вăтам тата пěчěк бизнес валли шăпах çакăн пек çул уçса пачě те ěнтě патшалăх 2008 çулхи июлěн 22-мěшěнче 159-мěш номерлě Федераллă Саккун йышăнса. Саккун ячě çапла: «Раççей Федерацийěн хăшпěр саккун акчěсене улшăнусем кěртесси çинчен тата вăтам е пěчěк предпринимательство арендăна илнě Раççей Федерацийěн субъекчěсен патшалăх харпăрлăхěнчи е муниципаллă харпăрлăхри куçман пурлăха вěсене парасси çинчен».

Унченхи çулхи августра вăя кěнě асăннă саккун вăтам тата пěчěк бизнеса суйлав çулě уçать: пӳлěмсемпе е арендăра усă курмалла, е харпăрлăха куçармалла?

Арендăри пурлăха харпăрлăха куçарма вăтам тата пěчěк бизнес ěçченěсене 2009 çулхи утă уйăхěн 3-мěшěнче РФ Патшалăх Думи йышăннă 149-мěш Федераллă Саккун (159-мěш Федераллă Саккуна улшăнусем кěртесси çинчен) çул уçать.

Патшалăх е муниципаллă харпăрлăхри куçман пурлăха вăтам тата пěчěк бизнес предпринимателěсен аллинче арендăра пулнă хыççăн харпăрлăха куçарма юракан вăхăта 2 çула çити чакарнă.

Саккуна кěртнě юлашки улшăнусем Пěтěм тěнчери экономика кризисěпе кěрешсе тунă утăмсем. Çавна пула Чăваш Республикинчи вăтам тата пěчěк предпринимательствăн 150 субъекчě аренда объекчěсене харпăрлăха куçарма май тупрě.

Аренда пӳлěмěсене харпăрлăха куçарма право пур предпринимательсем çакна тăсăмлă тӳлевпе (рассрочка) пурнăçлама пăхаççě. Çакна шута илсе Чăваш Республикин 2008 çулхи авăн уйăхěн 23-мěшěнчи 47-мěш номерлě саккунěпе тăсăмлă тӳлев 5 çуллăха пырать.

Чăваш Республикин территорийěнче патшалăх тата муниципаллă харпăрлăхри 700 объекта яхăн паян вăтам тата пěчěк предпринимательство ěçченěсем арендăра тытаççě. Иртнě çул вěсеннчен 17 объектне харпăрлăха куçарма палăртнă тата куçарнă пулсан, 2010 çулта çак ěçе 3 объект тěлěшпе туса ирттерме пăхаççě.

«Çěнě сăвăсем» ярăмран

Ырă ěç

АВТОРТАН: Ěç çынна илем кӳрет тесе каланине эпир ачаранах илтсе ӳсетпěр. Хамăр ӳссе çитсен кěçěнреххисене те çавнах вěрентетпěр. Çавна шута хурса тата ырă ěçе хакласа çыртăм эпě çак сăвăна. Ěçлекен çын темěнле ěывăрлăхра та çултан юлмасть. Çапла пултăр сирěнпе пуринпе те.

Ырă ěç вăл – çынна пулăшни,
Хурлăхра алă тăсса пани.
Ырă ěç вăл – сăмах пуçарни,
Кашни кун хěвел шевле сарни.
Ырă ěç вăл –хăвна юратни,
Вăй-хала чунра курни-туйни.
Ырă ěç вăл – хăв хисеп туни,
Аннене ăш кăмăлпа савни.
Ырă ěç вăл – çемье çавăрни,
Ачасем йăл кулса савăнни.
Ырă ěç вăл – ěмěре юлни,
Сан ěçӳ ăрăва тăсăлни.
Ырă ěç вăл – ěçпе савăнни,
Хăвăн хыççăн ыр ят хăварни.
Ырă ěç вăл – хăвна упрани,
Чун чысне тасалăхра тытни.

Т. МИХАЙЛОВА.

Ваçкасси ялě.

Килти хушма хуçалăх

Пахчара сивěрен асăрханăр

Хěл пуçламăшěнче юр сахалрах пулчě пулсан, юлашки вăхăтра унăн сийě палăрмаллах хулăнланчě. Кăçалхи çанталăкра килти хушма хуçалăхри сад пахчисем сиен курмарěç-ши? Паян улмуççисем таврашěнче мěн тума кая юлман?

И. СТЕПАНОВА.

Ыранхи кун пирки шутлакан пурри питě савăнтарать. Чăнах та, малтан юр пулманни, кайран вăл тăруках нумай çуса лартни пахчаçăсем умне хăйне евěр ыйтусем кăларса тăратрě. Паян улмуççисене шăшисем кăшлассинчен сыхласа хăварасси малти вырăнта тăрать. Кăпăшка юр айěнче вěсем улмуççи вуллисем патне çăмăллăнах çитейреççě. Апат сахал вăхăтра вěсем вулăсене кăшласа пахчаçăсене пысăк сиен кӳме пултараççě. Çак инкекрен хăтăлас тесен юр кăпăшкине пăхмасăрах ăна улмуççисем таврашěнче пусăрăнтармалла. Ăна валли улмуççисен таврашне таптаса тухни те ытлашши мар.

Сывлăхне сыхласа хăварнă улмуççисемпе грушăсем çитес кěркунне те тулăх çимěçпе савăнтарěç.

А. МАТВЕЕВ,
пуян опытлă пахчаçă.

Ěне сěчě чěлхи çинче

Эпир çамрăк-ха, анчах килти хушма хуçалăхра ěне усратпăр. Ăнланатпăр, ялти пурнăç ěне усрассипе тачă çыхăннă. Аслă ăрури çынсем ěнене хресченěн çур пурнăçě тесе хаклани те унăн пěлтерěшне ӳстерет кăна. Ěнесем çулла ытларах сěт параççě, анчах ăна сутма хакě ӳкнě. Хěлле вара, пасарта сěт сахал чухне, унăн хакě хăпарать. Ěнесем хěлле те сěт нумай антарччăр тесен мěн тумалла-ши?

В. ГАЛКИНА.

Ěне хěллехи уйăхсенче сěт лайăх антартăр тесен ăна ноябрь вěçěнче – декабрь пуçламăшěнче пăрулаттарма тăрăшмалла. Манса ан кайăр, малтанхи вунă кунěнче вăл сěт мар, ěне ырри антарать. Тепěр виçě уйăхě – сěт суса илмелли чи ăнăçлă тапхăр. Ěнене лайăх çитерсен вăл çак вăхăтра сěт питě нумай антарнă тапхăрăн пěтěмěшле хисепěн 40 проценчě чухлě продукци пама пултарать. Халăхра ахальтен мар ěнтě ěнен сěчě чěлхи çинче тесе калаççě. Ноябрь-декабрь уйăхěсем хыça юлчěç ěнтě. Çак вăхăтра е паян-ыран сирěн ěне пăруланă е пăруламалла пулсан, çитес çул та сирěн ěне çак вăхăтрах пăрулатăр тесен, ăна февраль уйăхěнче пěтěлентерсе хăварма тăрăшмалла. Ку ыйтупа эсир вырăнти выльăх тухтăрěсемпе канашласа пăхма пултаратăр.

В. ИЛЬИН,
выльăх тухтăрě.

Сыснасем самăртасси

Килти хушма хуçалăхра сыснасем усратпăр, çавăнпа та пěлес килет, вěсене миçе уйăх таран самăртма юрать?

О. СЕРГЕЕВ, В. ПЕТРОВ.

Ултă-çичě уйăхри сыснасем 100 е ытларах килограмм та тайма пултараççě. Анчах хăшěсем сыснасене çак виçе чухлě кăна самăртни усăллах мар, вěсене 200-250 килограмм таран самăртни çеç вырăнлăрах тесе шутлаççě. Çапах та, ятарласа тěпченě тăрăх, сыснасем, тěпрен илсен, 110 килограма çити самăртсан кăна паха та тачка какайлă пулаççě. Унран ирттерсен сыснасен çу кăна хушăнса пырать.

Çамрăк çурасене тачка какайлă самăртас тесен рационта концентрат виçи 60-70 процент, сало илес тесен вара çěр улмипе тымар çимěçěн виçи ытларах пулмалла.

Самăртма хупнă сыснана шыв çителěклě памалла. Куллен кашни выльăх 15 литра яхăн шыв ěçет. Шыв сахал пулсан сыснасем ӳт начар хушаççě. Çакна шута илсен, хěлле сыснасене ăшă вите кирлě.

Ю. КРАВЦОВ,
зоотехник.